# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "АЧАСЕНЕ Ӳ̆Т-ПӲ̆, ĂС-ХАКĂЛ, ĂС-ТĂН, ШУХĂШ-КĂМĂЛ ТАТА ЭТЕПЛĔХ АТАЛАНĂВĔ ÇИНЕ ЯПĂХ ВИТĔМ КӲРЕКЕН СĂЛТАВСЕНЧЕН ХӲТĔЛЕС ЕНĔПЕ ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ ХĂШ-ПĔР МЕРĂСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Ачасене ӳт-пӳ, ăс-хакăл, ăс-тăн, шухăш-кăмăл тата этеплĕх аталанăвĕ çине япăх витĕм кӳрекен сăлтавсенчен хӳтĕлес енĕпе пурнăçламалли хăш-пĕр мерăсем çинчен" 2009 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 43 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2009, 81 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 10 №; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000252 №; 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000761 №) улшăну кĕртес, унта çакăн пек çырса $4^1$ статья хушса хурас:

**"$4^1$ статья**

Ачасен (18 çула çитмен çынсен) ашшĕ-амăшĕ (вĕсене ылмаштаракансем) е ачасем хутшăннипе мероприятисем ирттерекен çынсем пĕрле пулман чухне шыв объекчĕсенче (юхан шывсем тата шыв усравĕсем) пулма юрамасть.".

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕ
39 №